Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ

## АТТЕ–АННЕ ÇУМНЕ ЛАРСАССĂН...

Ӳссе çитсен, çунат сарсассăн,
Çӳле вĕçессĕн туйăнать,
Тăван анне çумне ларсассăн
Чĕре хĕрӳллĕнрех тапать.

Çурхи кунсем йăл–йăл кулсассăн,
Уйра янрать тăри сасси.
Тăван атте пĕрле пулсассăн,
Ăнса пырать суха касси.

Илем кӳрсе çӳретĕр пăчăр
Кĕрхи вăрман уçланкине.
Тус–тантăшсем, нихçан ан пăсăр
Атте–аннемĕр кăмăлне.

1987

## УПРА ТĂВАН ЧĔЛХЕМĔРЕ

Ан тиркесем чĕлхемĕре,
Ан хăй ăна начар теме, —
Унпа сана аннӳ ӳстернĕ, —
Юрла–юрла хуллен сиктернĕ.

Савар, мухтар чĕлхемĕре,
Ăна усрар чыс–хисепре, —
Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ,
Чăн тӳпене çити çĕкленнĕ.

Упрар тăван чĕлхемĕре —
Чун–чĕрери хĕлхемĕре, —
Унпа эпир ялан çĕнтернĕ,
Çĕршыв ятне çӳле çĕкленĕ!

1962

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, —
Унта пин–пин çулсен йĕрри,
Унта хăват илет çĕнни,
Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, —
Ун курăнмасть вĕçĕ–хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ сутă çăлтăрсем.

Мĕнле чипер чăваш тĕрри,
Унта маттур хĕрсен çĕрри.
Унта шур хурăнсен ĕшни,
Унта шур акăшсем вĕçни.

Мĕн авалтан чăваш тĕрри
Хĕвеллĕ, хӳхĕм çав тери.
Унта тăван ялйыш сасси,
Хирти ака–суха касси.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, —
Унта çынсен хĕрӳ чĕри,
Яш–кĕрĕмсен паха парни,
Çĕршыв–анне çунат сарни...

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, —
Унта пин–пин çулсен йĕрри.

1987

## ПОЭТ САССИ

Поэт сасси, сăвви–юрри
Çĕклетĕр халăх кăмăлне.
Ан пултăр вăл хĕн–хур чури.
Хăвартăр хăйĕн çут йĕрне.
Поэзире — сӳнми илем!..
Вăл шыв таппи, ача кулли,
Чуна çунат паран хĕлхем,
Тăван уй–хир тырри–пулли.
Поэзире — çурхи тĕнче,
Çĕнелнĕ ял, кĕрлен хула...
Çак хамăр аслă çĕр çинче
Эпир хăватлă унпала.
Поэзире тăрать çунса
Сăпайлăх, туслăх, юрату...
Калатăп эпĕ хумханса:
Çак мар–и санăн хăвату!

1963